**«Педагогсемпе наставниксем – Муркаш ҫĕрĕн мухтавĕ»**

# «Манăн наставник – манăн юратнă атте, эпĕ ăна тав тăватăп»



**Людмила Митрофанова хореограф педагога пирĕн тăрăхра пĕлмен ҫын ҫук та пулĕ. Округ тулашĕнче те унăн тата вĕренекенĕсен ĕҫне пысăка хурса хаклаҫҫĕ, вĕсем кирек епле мероприятие те илем кӳреҫҫĕ.**

**Эпĕ Людмила Александровнăна калаҫăва чĕнтĕм, педагог профессийĕн суйлавĕ пирки каласа пама ыйтрăм:**

– Пулас профессие суйлама ҫăмăл мар. Эпĕ шухăшланă тăрăх, вăл ҫыннăн чун-чĕрине тивĕҫтермелле. Ĕҫ кунĕ хăҫан вĕҫленесси пирки шухăшламасăр ĕҫе тулли кăмăлпа кайни – телей. Эпĕ – пултарулăх профессийĕн ҫынни.

Ача чухне пирĕншĕн атте-анне, асатте-асанне наставниксем пулса тăраҫҫĕ. Манăн асанне шкулта ĕҫленĕ, ачасене юрă-кĕвĕ ăсталăхне вĕрентнĕ, вăл Кашмаш шкулĕнчи ачасен хорне ертсе пынă.

Манăн атте – Александр Ефремович Романов – манăн наставник. Вăл ĕмĕр тăршшĕпе шкулта ĕҫленĕ, хăйĕн ăсталăхне ачасене панă. Александр Ефремович Хусанти культура институтĕнче вĕреннĕ, 36 ҫулта хореограф профессине алла илнĕ. Шкулта нумай ҫул музыка урокне тата хореографи кружокне ертсе пынă. Ҫак икĕ ĕҫе пĕр вăхăтра шайлаштарса пыма ҫăмăл пулман, анчах та специалистсем ҫук пирки тăрăшма тивнĕ.

Унăн вĕренекенĕсем вара мана мĕн пĕчĕкрен пĕлеҫҫĕ, мĕншĕн тесен атте ачаллах мана концертсемпе репетицисене илсе ҫӳренĕ. Анне те ташăра пысăк ăстаҫă пулнă. Пĕррехинче аттепе анне бал ташшисен конкурсне хутшăннă, аннен ун чухне ҫие юлни виҫĕ уйăх ҫитнĕ. Вĕсем конкурс ҫĕнтерӳҫисем пулса тăнă, вĕсемпе пĕрле, паллах, эпĕ те.

Хамăн наставник концерчĕсемпе репетицийĕсенче пулнă чухне вăл юрра-ташша, чăваш халăх йăли-йĕркине питĕ юратнине туяттăмччĕ. Атте мана хореографин калама ҫук ытарлă тĕнчине алăк уҫма пулăшрĕ. Мана мĕн ачаранпах илĕртнĕ хореограф профессийĕн суйлавĕ патне эпĕ майĕпен пытăм.

Пуҫламăш классенче хореографи кружокне ҫӳреме пуҫларăм. Ҫав вăхăтран хам ĕмĕт патне утма тытăнтăм. Ку профессипе ачасене юратмасăр ĕҫлеме май ҫук. Хореограф педагогăн тĕп инструменчĕ – ачасем. «Ачасене юратмалла, вĕсене килĕшме тăрăшмалла, вĕсен шанăҫне кĕмелле», – ҫапла калатчĕ атте.

Хореографăн питĕ чăтăмлă пулмалла, ачасенчен ҫирĕп ыйтма пĕлмелле.

Темиҫешер сехет репетици тунин пĕтĕмлетĕвĕ куҫĕ умĕнче – кирек епле мероприятие те савăклатса яракан илемлĕ ташă. Хореографи ушкăнĕсемпе тĕрлĕ конкурса хутшăнатпăр. Кирек епле педагога та ачасен ҫитĕнĕвĕ савăнтарать.

Хам тĕллеве пурнăҫлас тесе эпĕ 1993 ҫулта Ҫĕрпӳри культура училищине вĕренме кайрăм. Ун хыҫҫăн Ҫатракасси шкулне ĕҫлеме вырнаҫрăм. Кунта эпĕ ҫак ĕҫе малалла тăсакансене вĕрентсе хатĕрлерĕм. Н. Ерзуковăпа И. Шарова хореографсем пулса тăнинче манăн тӳпе те пур тесе шухăшлатăп. Наталья Михайловнăн ĕҫне унăн хĕрĕ Вероника малалла тăсни те савăнтарать.

Тавах мана вĕрентекен учительсене ăсталăх панăшăн, пурнăҫ ҫулĕ ҫине тăма пулăшнăшăн. Кунта эпĕ аттен вĕренекенне – манăн вĕрентекене Зоя Александровăна – ырăпа асăнатăп. Вăл историпе йăла ташшине вĕрентрĕ пире.

Ҫапла ҫул хыҫҫăн ҫул иртрĕ, аслă пĕлӳ илме шухăшларăм. И. Ульянов ячĕллĕ патшалăх университечĕн педагогикăпа психологи факультетне вĕренме кĕтĕм, ҫав хушăрах бал ташшии енĕпе те ăсталăх пухма ҫӳрерĕм.

Социаллă педагог, психолог педагог квалификацисемпе аслă пĕлӳ дипломне 2000 ҫулта илтĕм. Аслă пĕлӳ маншăн чикĕ мар, квалификацие ӳстерсе пыма тăрăшатăп, профессиллĕ мастер-классене хутшăнатăп.

Бал ташшисен специальноҫне те алла илни мана пурнăҫра питĕ пулăшса пырать. Эпĕ халĕ Муркаш тăрăхĕнче ҫирĕм ҫул хам мастер-классем ирттеретĕп, районти ача-пăча пултарулăх ҫурчĕн ертӳҫипе Алевтина Рожковăпа «Туслăх хумĕ ҫинче» бал ташшисен конкурсне пуҫартăмăр.

Тĕрлĕ мероприятире пĕр-пĕрин ĕҫĕпе паллашни, ыйтусене пĕрле сӳтсе явни кулленхи ĕҫре питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Ҫакăн пек тĕл пулусем мана ҫĕнĕ наставникпа Рига хулинчи «Dk Dance Theatre» ушкăн ертӳҫипе, тĕп хореографĕпе Дарина Кудлаевăпа, «ДЖАМП» ташă лабораторийĕн ертӳҫипе Анна Уфимцевăпа, «Культурная революция» ушкăн ертӳҫипе Кристина Мацкевичпа паллашма май пачĕҫ. Мана вĕсем 2006 ҫулта Ялтăри хореографи курсĕнче чылай ҫĕнĕлĕх вĕрентрĕҫ.

Педагогика ĕҫĕ харпăр хăйне аталантарма май парать, енчен те педагог тавракурăма анлăлатма тĕллев тытнă пулсан. Хореографăн тĕп ĕҫ вырăнĕ – пысăк тĕкĕрлĕ анлă зал. Тĕкĕрĕ илемпе киленме мар, ĕҫлеме кирлĕ. Эпир, хореографсем, ташă урлă ачасене пурнăҫа, Тăван ҫĕршыва юратма, чăваш халăх йăли-йĕркине упрама тата хаклама вĕрентетпĕр тесе шухăшлатăп.

Пирĕн репертуарта вырăс, тутар, белорус, паллах, чăваш халăх ташшисем. Хамăн ĕҫ мана ирĕклĕ туйма май парать. Енчен те хореографа вĕренсе тухнă пулсан, кирек епле кăткăс лару-тăрăва та ҫăмăл чун-чĕрепе йышăнатăн.

Хореограф ĕҫĕ вăл – пурнăҫ майĕ, илемлĕх тĕнчи. Ҫак ĕҫ ҫынна яланах хăйне ҫирĕплĕхре тытма май парать. Ташăна вĕренмесĕр май ҫук, унсăрăн ташă пулмасть, кӳршĕ ташăҫа та кӳрентермелле мар, килĕшӳ пулмасан та илемлĕ ташă пулмасть, пĕр-пĕрин ҫине ăшă кулăпа пăхса пĕр ҫыхăнура ташласан кăна ташă пулать.

Учитель ĕҫĕ мĕн авалтан хисеплĕ професси шутланнă, унăн яланах шыравра пулмалла. Ĕҫĕн малтанхи тапхăрĕнче – хăнăхса ҫитеймен вăхăтра – тĕрлĕ йывăрлăхпа тĕл пултăм, йăлтах ҫĕнтертĕм пулĕ. Халĕ эпĕ 25 ҫул ĕҫлетĕп, манра учитель ăсталăхĕ пуханчĕ тесе шухăшлатăп. Ҫак вăхăт тĕлне нумай выпускник ансамбльпе сывпуллашрĕ, хăшĕ-пĕри хореограф профессине суйларĕ. Часах вĕсем те ачасемпе ĕҫлеме пуҫлĕҫ.

Хамăн наставника савăнăҫ ҫулĕсемшĕн, кăсăклă ĕҫшĕн тав тăватăп. Эпĕ хама телейлĕ ҫын тесе шухăшлатăп, халĕ хам та наставник тата учитель.

**– Людмила Александровна, пирĕн калаҫăва икĕ пая пайлатăп. Нумаях пулмасть сирĕн «ача» – «Вдохновение» ушкăн 20 ҫул тултарчĕ. 20 ҫул – ура ҫинче ҫирĕп тăракан вăхăт. Юбилей уявне мĕнле ирттертĕр?**

– Эпĕ ачасен тĕслĕхри «Вдохновение» хореографи ушкăнне, шкулчченхи «Дети Ангелы» ушкăна ертсе пыратăп. Ҫавăн пекех округри хореографсен методика пĕрлешĕвĕн ĕҫне йĕркелесси те – ман ҫинче. Нумаях пулмасть эпир «Вдохновение» ушкăн ҫуралнăранпа 20 ҫул ҫитнине Муркаш шкулĕн хăтлă залĕнче килти пек ăшă лару-тăрура уявларăмăр. Шăпах ҫак залра эпир концерт программисемпе тухса ҫӳреме ҫĕршер репетици ирттернĕ.

Уявпа пире нумай саламларĕҫ. Муркаш муниципалитет округ администрацийĕн вĕренӳ, ҫамрăксен политикин тата физкультурăпа спорт пайĕн ертӳҫи Зоя Дипломатова ăшă сăмахсем каларĕ. Пирĕн ĕҫе пысăка хурса ушкăна парнепе, хастар ашшĕ-амăшне Тав ҫырăвĕпе чысларĕ, ҫак ушкăн районта кăна мар, республикăра та лайăххисен шутĕнче тăнине палăртрĕ.

Шкул ертӳҫи Николай Смирнов ушкăна саламланипе танах ашшĕ-амăшĕсен комитетне те ырăпа асăнчĕ, ачасене пылак парнепе савăнтарчĕ, «Вдохновение» ушкăн район чысне республика, пĕтĕм Раҫҫей тата Халăхсем хушшинчи конкурссенче хӳтĕлесе ҫĕнтерӳҫĕсен йышне кĕнине пĕлтерчĕ. Ырă сăмахсем пире хăпартлантарса ячĕҫ, малашне татах та тăрăшарах ĕҫleme хавхалантараҫҫĕ.

Хореографи ушкăнĕ ачасене пĕр тытăмра пулма хăнăхтарать, ĕҫлеме те, савăнма та пĕрле кăна лайăх. Ҫак вăхăт тĕлне «Вдохновение» тата «Дети Ангелы» ушкăнсенче ҫĕре яхăн ача вĕренет, вĕсем – 6 ҫултан пуҫласа 15 ҫулчченхи ачасем. Эпир репертуара тăтăшах ҫĕнетме тăрăшатпăр.

Сцена ҫине илемлĕ тумпа тухма вара пире Зоя Павлова тата Венера Колбасова ҫĕвĕҫсем пулăшаҫҫĕ. Ансамбле ҫӳрекен ачасем уйрăмах юлашки ҫулсенче округ мероприятийĕсене активлă хутшăнаҫҫĕ.

Юбилей концертне ирттерме пулăшнă Николай Смирнова, Валентина Романовăна, Андрей Шишокина, Наталья Архандеевăна, Эмма Филипповăна тав тăватăп.

**– Людмила Александровна, редакци сире юбилей ҫулталăкĕпе саламлать, пархатарлă профессире ĕҫлеме ăнăҫу, ҫирĕп сывлăх сунать, малашне те Сирĕн илемлĕ ташăсем округ, республика тата ун тулашĕнчи уявсене илем кӳччĕр. Педагог ăсталăхĕ, ачасемпе ĕҫĕре юратасси нихăҫан та ан иксĕлтĕр.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: Людмила Александровна «Вдохновение» ушкăн ачисемпе юбилей мероприятийĕ хыҫҫăн; ҫулсерен иртекен педагогсен конкурсĕн ҫĕнтерӳҫине чысланă самант.**



«Педагогсемпе наставниксем – Муркаш çĕрĕн мухтавĕ»

# Вĕрентекенсем пур енĕпе те маттур

Муркаш муниципалитет округĕн вĕренӳ, çамрăксен политики, физкультурăпа спорт пайĕ тата «Ача-пăча пултарулăх çурчĕ» хушма вĕренӳ учрежденийĕ йĕркеленипе майăн 15-мĕшĕнче «Çемье – пысăк тĕлĕнтермĕш» ятпа муниципалитет шайĕнче çемье фестивалĕ иртрĕ. Педагогра наставник çулталăкне тата Телейлĕ ачалăх çулталăкне халалланă савăнăçлă мероприяти «Муркаш енчи сăпка юррисем» муниципалитет проекчĕ тăрăх пулчĕ.

Çемье фестивальне Муркаш муниципалитет округ администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Лилия Тарасова, вĕренӳ, çамрăксен политикин тата физкультурăпа спорт пайĕн ертӳçи Зоя Дипломатова, «Çамрăк техниксен станцийĕ» хушма вĕренӳ организацийĕн ертӳçин тивĕçне вăхăтлăх пурнăçлакан Сергей Налимов, «Раççейри ача-пăчапа çамрăксен центрĕ» ФГБУ ертсе пыракан эксперчĕсем, Пĕтĕм Раççейри «Ачалăх навигаторĕсем» проектăн муниципалитетри координаторĕсем Алевтина Рожковăпа Роман Григорьев хутшăнчĕç.

Уяв Натальăпа Петр Борзаев педагог-наставниксен саламлă юрринчен пуçланчĕ. Фестивале хутшăнакансем умне ăшă сăмахсемпе Зоя Дипломатова тухрĕ, çемье пĕлтерĕшĕ питех те пысăк пулнине, ача воспитанийĕ шăпах та çемьерен пуçланнине палăртрĕ. Лилия Тарасова пухăннисене мероприятире ăнăçу сунчĕ, «Я – женщина» конкурса та активлă хутшăнма сĕнчĕ. Алевтина Рожкова каланă тăрăх, ку фестиваль округра пĕрремĕш хут иртет. Çемье фестивалĕ çемье йăли-йĕркине упрама, ăна ăруран ăрăва куçарма, çемье хаклăхне ӳстерме май парать. Çемье пĕлтерĕшĕ пысăк пулнине шута илсе малашне ку енĕпе анлăрах ĕçлеме палăртнине пĕлтерчĕ.

Фестивалте шкулсенчи вĕренӳ ĕçĕн советникĕсем, ашшĕ-амăшĕсем, учительсем шкул тата ача сачĕсенчи ачасем ăсталăх кăтартрĕç. Уяв çемьери ал ĕç ăсталăхĕпе, юрă-кĕвĕ енĕпе, художество пултарулăх тĕлĕшĕпе, сывă пурнăç йĕркине пропагандăлассипе, çемье туризмĕ, ял хуçалăхĕ тата ытти темăпа иртрĕ. Çемьесем сăн ӳкерчĕксен куравне йĕркеленĕ. Кашни çемьен хăйĕн ăсталăхĕ, ĕç вăрттăнлăхĕ. Вĕсем интерактивлă площадка хатĕрленĕ, харпăр хăй çемйипе паллаштарчĕç, мастер-класс кăтартрĕç. Тĕрлĕ вăйă, конкурс, флеш-моб иртрĕ. Фестиваль çуллĕ шайра пулни, йĕркелӳçисем тăрăшни курăнчĕ.

**Сăн ӳкерчĕкре** уява хутшăннă Олесьăпа Михаил Клюшковсен çемйине тата пултарулă педагога, наставника, культура ĕçĕн ăстине Надежда Кондукторована куратăр. Вĕсем уява хутшăнма пĕрле хатĕрленсе килнĕ. Олеся Сергеевна Катькасри «Родничок» ача садĕнче воспитательте 14 çул тăрăшать, 1 категорири ĕçчен.

Ачасем Калайкасси шкулĕнче вĕренеççĕ, «Пилеш» фольклор ансамблĕнче ăсталăх кăтартаççĕ, çавăн пекех Софья «Задорные ложкари» ансамбле çӳрет, Яна – «Сывлăмпи» фольклор ушкăнне. Çемье вырăнти мероприятисенче, обществăлла ĕçсенче хастар. Михаил Юрьевич та пултарулă çын.

**Кăларăма Роза МАКАРОВА хатĕрленĕ.**




**«Педагогсемпе наставниксем – Муркаш çĕрĕн мухтавĕ» проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕн, информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.**

Пуçарулăх

# Исетерккĕсем пĕве юсарĕç



Çул-йĕре пурнăç артерийĕпе танлаштаратпăр пулсан, шыв та пирĕн пурнăçра çул пекех питĕ кирлĕ. Шыв хаклăхне исетерккĕсем уйрăмах лайăх пĕлсе тăраççĕ. Çумăр сахал çуса хĕле кĕнĕ çулсенче çырмаран шыв туртни те сахал мар пулнă. Пурнăç улшăнса пырать, çынсем килсерен скважинăсем чавтарма пуçларĕç, хăш-пĕр килте икшер çăл. Халăх ыйтăвне шута илсе Чуманкасси территори пайĕ маларах урамсенче çăл тума бетон ункăсем туянса пачĕ. Çынсем уншăн тав сăмахĕ калаççĕ, çавăн пекех ĕçмелли пахалăхлă шывпа тивĕçтерессите яла çитессе шанатпăр тата кĕтетпĕр.

Турри сыхласа тăтăр та, çăлсене пăхса тирпейлесе тăни анчах мар, пĕвесене вăхăтра юсани те чи малтанах пушар хăрушсăрлăхĕпе çыхăннă. Çавна шута илсе темиçе çул маларах çынсем ял варринчи пĕвесене юсарĕç, пĕр пĕве патне пыма вара пуçарулăх бюджечĕн шучĕпе çулăн пĕр пайне вак чул сарса юсанă чухне хытарса çирĕплетсе хăварчĕç.

Çавăн пекех исетерккĕсем нумаях пулмасть хăйсен укçи-тенкипе улăхри пĕвене юсарĕç. Вăл вара ĕнесене питĕ кирлĕ. Çурхи шыв çулсеренех пĕве пуçне çурса каять, шывĕ тĕпне кăна юлать.

– Тĕплĕнех юсамалла, унсăрăн тăрăшни сая каять, пурин те ĕçлеме тухмалла, хамăра кирлĕ, çын килсе туса памасть – терĕ çак ĕçе йĕркелекен Леонид Филиппов пенсионер.

Çынсем май пур таран темиçе кунах тухса ĕçлеме тăрăшрĕç, пĕр килтен темиçĕн тухни те пулчĕ. Эпĕ те пĕр кун хутшăнтăм, çав кун ĕçленисене ӳкертĕм. Ытти кунсенче, паллах, урăххисем те тухнă. Анатолий Степанов **(иккĕмĕш**



**сăн ӳкерчĕкре сылтăмри)** хăйĕн килти тракторĕпе тăпра чылай турттарчĕ. Геннадий Илларионов та килти тракторпа тăрăшрĕ. Çак тракторсем пулмасан ал вĕççĕн кăна пĕвене юсама пулмастчĕ. Ĕçĕ пурин валли те ситрĕ, тимĕр валак турĕç, пĕве пуçне тĕплĕнех çирĕплетрĕç тата ытти те.

**Роза ИЛЛАРИОНОВА.**

Пĕчĕк тата вăтам предпринимательство

# Çĕр ĕçченне кирлĕ магазин уçăлчĕ

Муркаш муниципалитет округĕ çĕнĕлĕхсене пурнăçа кĕртессипе чылай чух ырăпа палăрать. Çакна эпир пĕчĕк тата вăтам предпринимательство аталанăвĕнче те куратпăр. Округри ĕçлĕ çынсем пурнăç уттипе тан пыни, вĕсем çĕнĕлĕхсене çул парассинче патшалăх пулăшăвне айккинче хăварманни пирĕн енре пĕчĕк тата вăтам предпринимательствăна сумлăрах аталанма пулăшать. Кун хыçĕнче округ экономики тĕрекленни, хамăр тăрăхра пурăнакансем валли çĕнĕ ĕç вырăнĕсем йĕркеленни, ĕç тата пурнăç условийĕсене лайăхлатассипе тĕллевлĕ тăрăшни тăраççĕ. Çак ырă енсене район центрĕнче паян пирĕнтен кашниех асăрхать.

Çу уйăхĕн пуçламăшĕнче Муркашра «Ял хуçалăх машинисен саппас пайĕсем» магазин уçăлни – маларах каланин куçа курăнакан çимĕçĕ. Ăна усма районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен ертӳçисем, хресчен (фермер) хуçалăхĕпе ĕçлекенсем, ялсенче çĕр ĕç техникипе туслисем хутшăнни асăннă магазинăн пĕлтерĕшĕ пысăккине çирĕплетрĕ.

– Паян çĕр ĕçченĕ иртен пуçласа сĕм каçчен çурхи акара. Çурхи кун çулталăк тăрантарать тенине шута хурса, вăл уяр кунăн кашни секунчĕпе туллин усă курма тăрăшать. Ĕçне кура ăнăçăвĕ те куç умĕнче – вĕсем çурхи уй-хир ĕçĕсене вĕçлесе пыраççĕ. Округ ял хуçалăх продукцийĕ туса илессипе пысăк опыт пухнипе пĕрлех çĕнĕ технологисене çул парассипе те çанă тавăрса тăрăшать. Ăна пурнăçа кĕртессинче хăватлă та юсавлă техника – тĕп вырăнта. Асăннă магазин хресчене вăхăтлă пулăшу парасса шанатăп, – терĕ председательсемпе фермерсене магазина иртме сĕнсе Муркаш муниципалитет округĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Андрей Мясников.

Килсе çитнĕ ял хуçалăх предприятийĕсен ертӳçисемпе фермерсене **(сăн ӳкерчĕкре)** магазинта унăн хуçи Роман Николаев кĕтсе илнĕ.

– Пирĕн тĕллев ансат пулĕ: эсир – пирĕншĕн, эпир – сирĕншĕн. Хамăр ĕçе çакна никĕслесе пуçаратпăр. Хĕрӳ ĕç вăхăтĕнче сирĕн саппас пай шыраса инçе çӳремелле ан пултăр. Ыйтăвсене кирек хăш вăхăтра та сире майлă татса пама тăрăшăпăр, – терĕ Роман Игоревич компьютер базинче саппас пайсен пысăк хисепĕ пуррине палăртса. Çĕнĕ услугăсем сĕнекен магазинпа округри пĕрлешӳллĕ кооперативсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсем малашне тĕллевлĕ ĕçлеме килĕшӳ турĕç.

Муркашри «Пятерочка» суту-илӳ çурчĕпе пĕр çĕрте вырнаçнă çĕнĕ магазин патĕнчен паян автомашинăсем таталмаççĕ.




Вĕсем хушшинче пĕрлешӳллĕ кооперативсен, хресчен (фермер) хуçалăхĕсен специалисчĕсем те, килти хушма хуçалăха аталантаракан ял çыннисем те пур. Пĕрисем кирлĕ саппас пайсене саккас тăваççĕ, маларах килĕшӳ тунисем тавар туянса тăван хуçалăха васкаççĕ.

– Тавах пуçарулă ĕçченсене ял çыннишĕн тăрăшнăшăн. Хĕрӳ ĕç вăхăтĕнче паха вăхăт çухалманнишĕн хĕпĕртерĕм, – терĕ Етĕрне округĕнчи Асламасран килнĕ фермер косилка валли çĕнĕ сăнчăр туяннă май.

**Анатолий БЕЛОВ.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**